Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Афанасьев Алексей Андриянович**

**Книга: Пирĕн интернат**

**Стихотворение: Мĕнлескер вăл интернат?**

Телефон юпи юрлать,
Йăнлатать йĕс пăралук.
Пысăк çын пек, çĕн шкула
Вĕренме каять Тимук!

Автобус тĕлне çитсен,
Чарăнчĕ çӳрен лаша.
Амăшĕ пĕр-ик хутчен
Ыталарĕ Тимуша.

Ăсату-çке, ăсату!
Тухатех çав куççулли...
Вăхăт, вăхăт, сапăр ту –
Юлатех калаçмалли.

Автобусĕ, çĕнĕскер,
Пĕр хускалчĕ кăшкăртса.
Силленсе юлать кĕпер,
Пыраймасть шывпа юхса...

Таврана пăхать ача:
Куç тулли кĕрхи илем!
Иртейсе юлаç хыçа
Аякри хирсем, ялсем...

Ак хула хĕрри. Вокзал.
Автобус вокзалĕ, тет.
Тĕрлĕ халăх, тĕрлĕ ял
Туянать кунта билет.

Автобусĕсем нумай,
Пĕринчен пĕри хитре!
Шикленмесĕр лар та кай –
Çитĕн час çитес çĕре!

Хулара çӳрет Тимук,
Ашшĕнчен юлмасть пĕр шит.
Çитмĕл çичĕ пăралук,
Урамсем те çитмĕл çич...

Ак хула хĕрне çитсен,
Йăлăхсассăн çӳреме,
Шурĕ тухрĕ пĕр енчен
Шурă чĕнтĕрлĕ хӳме,

Уçăлать картиш енне
Юмахри пек чул хапха.
Речĕпе хӳме хĕрне
Лартнă лăпсăркка çăка.

Картишне кĕрсен, садра,
Шучĕ çуккă йывăçсен.
Ырă мар-им шăрăхра
Йывăç сулхăнне кĕрсен?..

Вăрăм ĕмĕрлĕ вăрман
Кашласа ларсан ялан,
Сивĕре те çын шăнман,
Шăрăхра та аптраман!

Виçĕ хутлă виçĕ çурт
Çавракa кăртишĕнче.
Пысăк кантăксем çап-çут,
Алăкĕ те темиçе!

Кĕчĕç пысăк алăкран.
Çырнă: «Ваннă», çырнă
«Душ».
Ашшĕнчен аташасран
Шикленсе утатъ Тимуш.

Тепĕр алăк тăррине
Çырнă: «Кастелянская».
Тимахви енчен енне
Пăркалать кăна мăя.

Алăк уçăлчĕ вăштах.
Пӳлĕмĕ – тумланмалли.
Темиçе сентре, кашта,
Япала унта тулли!

Тухтăр пек, шур халатпа
Вăркăшса çӳрет аппа.
Тимуша вăл пĕр çĕклем
Тыттарать япаласем.
Мĕн кăна памарĕ-ши?..
Мăшăр атă, çут пушмак,
Çĕн кĕпе-йĕм, пиçиххи,
Пальтопа кĕске пиншак...

Супăнь, пит шăлли таран
Пачĕç пирĕн Тимуша
Ашшĕ тĕлĕннĕ, куран,
Путнă тарăн шухăша.

Щёткă пур шăл тасатма,
Пачĕç çыхнă мунчала.
– Кайăр, – терĕç, – çăвăнма
Халĕ пирĕн мунчана.

Ваннӑйпа душ пӳлӗмне
Кӗртрӗ ашшӗ ывӑлне.
Ҫӑвӑнать те Йӑкӑнат,
Ватӑ чунӗ савӑнать.

Ҫӑвӑнсассӑн, шӑлӑнсан,
Тасалать ӳтри тусан.
Тӗкӗре пӑхса кулан,
Турапа ҫӳҫе туран.

Тухтӑр пӑхрӗ Тимуша
Пӳрнипе шакка-шакка:
Ҫыхланман-и чир-нуша
Пӗчӗк, ҫамрӑк шӑм-шака?

Ҫӳллӗшне, йывӑрӑшне
Виҫрӗҫ акӑ ҫарамас.
Тимахви чӗрне вӗҫне
Тӑнӑччӗ те – юрамасть.

Пирӗн пӗчӗк Тимука:
– Ӳсен, – терӗҫ, – ан васка!
Ҫырмара ишен пуль-ха,
Кӑкӑру сан сарлака.

Паттӑр, – терӗҫ лӑпкаса. –
Ҫирӗп пултӑр сывлӑху.
Ҫу аллусене таса,
Кирӗк ан куртӑр хӑлху...

Якалсан, тирпейленсен,
Тухтӑрпа канашласан,
Тимуша йӗркипелен
Кӗртрӗҫ тепӗр алӑкран.

Икӗ рет сӗтел-пукан.
Лар чипер. Ан хуҫ, ан ват.
Аппӑшӗ пӗр кантӑкран
Антарса парать апат.

Ачасем хӑйсем кунта
Хатӗрлеҫҫӗ сӗтелне.
Чӑн-чӑн повар пек ӑста
Тыткалаҫҫӗ хӑйсене.

Пӑсланатъ умра яшка,
Сап-сар ҫу урпа пӑтти.
Ӗҫ те ҫи эс, ан васка.
Чейӗ – пан улми тути.

Кулленех тӑван килте
Курнӑ тӗрлӗ аш-пӑша.
Пултӑран яшки, серте

Тутлă пекчĕ Тимуша.

Килтинчен те тутлăрах
Пĕçереççĕ-мĕн кусем.
Хырăм тутă чух, паллах,
Кăмăл пулас çук кичем.

Уçă кăмăлпа тăрса
Утрĕç, тухрĕç урама.
Чун юрлатъ. Çи-пуç таса,
Ырă, ирĕк пурăнма!..

Çатма пек тип-тикĕс çул –
Хăш тĕлте шăвать ура.
Виçĕ хутлă çĕнĕ шкул
Çĕкленсе ларать умра.

Пусмисем ун шур чултан,
Хăпараççĕ çӳлелле.
Çав шкулта-мĕн ырантан
Тимахвин вĕренмелле.

Сылтăмра та пысăк çурт –
Тинĕсри шур карапах.
Çав çурта ним мар çил-юр –
Ăшăн, кан, итле юмах...

Çавăнта-мĕн Тимахвин
Малашне пурăнмалла.
Тусĕсем ун – виç çĕр çын,
Тусĕсем ун – çур хула!

Вун ачаллă çемьере
Тăвăр марччĕ Тимука:
Ик çынна пĕр минтере
Пайлаканччĕ мар-и-ха?

Унăн халĕ пурте пур:
Шур минтерĕ, утиял.
Çывăр, ырă тĕлĕк кур,
Вĕренме пуçтар вăй-хал.

Тимуша пурте аван,
Килĕшет пĕрре пăхсах.
Паллашсассăн, вырнаçсан,
Ашшĕнчен уйрăлмаллах.

Ашшĕ савăнăçлă ун,
Ывăлĕшĕн хĕпĕртет:
– Ырă хамăрăн саккун!
Хамăрăн влаçа рехмет!

Вулама, çырма вĕрен,
Шăл çыртса вĕрен ĕçе.

Тар тăкса çĕр ĕçлекен
Çĕрес çук çĕр айĕнче.

Çăмăл утрĕ Йăкăнат
Аллине сула-сула.
Ылтăн çулçă тăкăнать,
Тĕсĕпе витет çула.
Çул çинче тăрать Тимуш,
Каяс пек инçе-инçе.
Уринче ун çĕн калуш,
Çĕн карттус ун пуçĕнче.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.